42-100 3371.

Н. И. ШЕЛЕБИ

# ÇУЛПУÇНЕ ХАЛАЛАСА

ЧӐВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар. 1942

Н. И. ШЕЛЕБИ

# ÇУЛПУÇНЕ ХАЛАЛАСА

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР—1942

Цена 60 коп.

Редактор *Стихван-Шавлы.*

Подписано к печ. 30/VI-42 г. Заказ № 337. Тираж 2.500 экз.
НТ 531. Объем 0,875

г. Чебоксары, тип. № 1 Упр. полиграф. промышленности
при СНК ЧАССР

# ÇУЛПУÇНЕ ХАЛАЛАСА

## I

Пуçăнти шухăшу
Тĕнче пысăкăш,
Хĕвел пек ялкăшан
Çутă кунçулшăн.
Çавăнпа сан ятна
Пĕтĕм ĕçхалăх
Тĕнчипех пахалать,
Савать, саламлать.

* * *

Ылттăнлă, кĕмĕллĕ
Пуян çĕршывра—
Приискăсем, шахтăсем
Нумай вырăнта—
Икшер çĕр çухрăмран
Тусем Çĕпĕрте
Пĕлĕт пек курăнса
Тăракан çĕрте
Тĕл пулчĕ мана
Пĕр грузин—
Çутă сăнлă çын.
Çÿçĕпе куçĕсем

Йĕпкĕн хураччĕ,
Шухăшпе-пуçĕпе
Чăнлăх шыратчĕ.
Çавăнпа та ăна
Патша тарçисем
Нумай пин çухрăмран
Курса тăратчĕç,
Сыщиксем ун çине
Тискер пăхатчĕç,
Ик-виç пин çухрăмран
Шăлсем хăйратчĕç.
— Эс хăш нациren? —
Терĕм те ăна,
Тамара йăхĕнчен
Терĕ вăл мана.
— Тĕнчери чи хитре
Ачаш Тамара
Санăн йăх пулнă,—
Терĕм эп ăна.
Хĕвел пек йăл кулчĕç
Хĕрлĕ тутисем,
Çăлтăр пек вылянчĕç
Чакăр куçĕсем.
— Эх, ку мĕнле çын-ши,
Кам-ши ман умра,
Хĕвел-ши, уйăх-ши? —
Терĕ ман тумра.
Чим-ха, эп ку çынна
Тĕплĕнрех пĕлем,
Лайăхрах тавçăрса
Ăнласа илем.

Ман чаплă ĕçĕмре
Шăйрăк ан юлтăр,
Вăл ĕç ман ĕмĕрех
Ăнăçлă пултăр.
Çук, ку Тамара мар,
Ун пек ачаш мар,
Тамара пек хитрешĕн
Çунмасть ку чĕре.
Урăхла хастарлăх
Шырать вăл чĕре.
Ку паттăр пролеттар,
Чĕри вут-кăвар.

II

Аслă Çĕпĕр уншĕн
Пулнă хĕсĕк.
Тайга та куç хĕссе
Пăхнă сиввĕн.
Симĕс çулçă айне—
Йывăççен çумне
Ларнă вăл час-часах
Шухăша кайса.
Чуралăх сăнчăрне
Çапса çĕмĕрме
Ĕçхалăх аллине
Шаннă вăл чĕре.
Ăна çав вăхăтра
Ют йăхран тенĕ.
Юн тымарне хăртма
Сăнăпа пенĕ.

Тинĕссен тĕпĕ пек
Пытанса выртнă
Ăслăлăхсем тĕплĕн
Пуçĕнче вăрттăн.
Океан-тинĕсле
Хумханнă унăн
Çиçĕмлĕ шухăшсем
Вутăн та хĕмĕн.
Çĕпĕрте-тайгара,
Том шывĕ тавра,
Çулахи çанталăк
Кулса-çутăлса,
Шăй-ший шăхăрса,
Савăнса-юрласа
Тăнă вăхăтра
Çӳренĕ вăл тайгара.
Чулсем хайăрса,
Măкланнă тусене
Сăнавсем туса.
Ун пуçĕнчи çулăм
Ĕçхалăх ĕçĕнче
Курать çут тĕнче.
Çĕпĕр пуянлăхĕ
Вăл кив саманра
Унти ĕçхалăхне
Ним те парайман.
Ун çуне-хăймине
Çăхансем çинĕ,
Упа-утамансем
Чыхса пурăннă.
Халăха чеепе

Кышласа тӑнӑ,
Патшасен ячӗпе
Пӑвса пурӑннӑ.
Ултавҫӑ тӗнӗсем,
Пупӗсем суйса
Чухӑн ӗҫхалӑхне
Туланӑ кулса.
Пӗр йышши халӑхпа
Тепӗр йышшине
Ҫӗклесе ывӑтнӑ
Юнлӑ хум ҫине.
Ӗҫхалӑхӗ унта
Тискер пусмӑрта
Пурӑннӑ ҫыхӑнса,
Юнпа чыхӑнса.
Ҫапла хурҫӑ чӗре
Аслӑ Ҫӗпӗрте
Чултусем хайӑрса
Ҫӳренӗ ҫӗрте
Пӗтӗм тайга тулли
Кайӑк-кӑш ҫӳрет.
Пӑхсан, тӗнче тулли,
Пуянлӑх ҫӗрет.
Каҫса ҫӳреме ҫук
Урлӑ та пирлӗ
Шултра йывӑҫлӑх
Тӳннӗ ҫав тӗрлӗ.
Вӗҫсе-сиксе авӑтать
Хӗрлӗ автанӗ:
Ҫилпе вӗҫсе каять
Симӗс вӑрманӗ.

Хакларан та хаклă
Малти кун сана.
Тăрса юлать унта
Хăрăк тунката.

III

Совет Союз аслă,
Ĕçчен, хаваслă,
Ленин çулĕ çинче
Паттăр çĕнтерет,
Гитлерăн юнлă куçне
Çапса сӳнтерет,
Фашист танатине
Çунтарса ярать,
Ĕçхалăхĕн йышне
Çутă кун парать.
Совет Союз чăнах
Пуян та чаплă,
Унăн çĕршыв аслă,
Ĕçĕ хăватлă;
Улăхсем илемлĕ,
Тăвĕсем хитре.
Утисем техĕмлĕ,
Ачашлать тĕтре;
Кӳллисем çаврака,
Пуллисем нумай,
Тинĕссем сарлака,
Тăвĕсем пуян.
Ылттăн та кĕмĕл те,
Тимĕр-тăмăр та

Нумай халь унта.
Пирӗн ӗмӗрте
СССР талккӑшӗпе
Ҫурҫӗр енӗпе
Вӑрманӗсем ӗмӗр
Вӗҫӗ-хӗррисӗр.
Хурҫӑ йӑйӑр ҫими—
Ҫунан апат та
Унӑн ҫӗр мимминчен
Ҫӑл пекех тапать.
Сӑртсен айӗсенче
Хӗрӳ кӑмрӑк та,
Шурлӑ вырӑнсенче
Нумай торф та.
Хӗвел хӗртнӗ тӗлте
Ҫӗр мамӑкӗ те,
Рис та пур унта,
Ҫутӑ пурҫӑн та,
Вырьӑх та, тырпул та,
Ытти пурлӑх та.
Ушкӑн хуҫалӑх ун
Хунать кашни кун.
Эх, Совет Союзӗн
Ҫӗнӗ ҫутӑ сӑн!

IV

Ак тата Кузбасра—
Алтай таврашсем—
Пӑхар-ха тавҫӑрса,
Мӗнле ҫӗршывсем.

Унталла ҫавранса
Тинкерсе пӑхсан,
Хамӑрӑн ҫӗршыва
Савӑнса мухтан.
Вӑл ҫӗршыв талккӑшӗ
Пӗтӗм калппинпе
Индустри сӗткенӗ.
Ҫӗршывсен пахисем
Нумай Алтайра.
Ун пекрех ҫӗршывсем
Тӗнчипех сайра.
Хӑмӑш пек хунавлӑ
Тырри-пуллисем,
Тинӗс пек хумханать
Сарӑ туллисем,
Вӑрмансем-черсем,
Выльӑх-чӗрлӗхсем
Ӗмӗрех ӗрчевлӗ
Алтайра вӗсем.
Пылӗсем-ҫӑвӗсем,
Шерпет ҫӑлӗсем
Техӗмлӗ, тутлӑхлӑ,
Нумай сутлӑхлӑ.
Томӗ те, Контӑм та,
Тӗтре сывлӑм та
Яланах хӑватлӑ
Сывлӑхшӑн унта,
Мункач та, Юнга та,
Ене, Чулым та
Пуянлӑхӗпе
Ҫунать ҫулӑмпа.

Ылттăнлă-кĕмĕллĕ
Чулсем хушшипе
Юхаççĕ шывĕсем
Çăлтăр юххипе.
Кĕр-кĕр-кĕр кĕрлесе
Хура пĕлĕтсем
Чупаççĕ ярăнса
Тусен тăррипе.
Пĕлĕтрен çакăннă
Кедрсем-хырсем,
Акнă пек шăтаççĕ
Уйра хурăнсем.
Татса та, çисе те
Пĕтмест çĕмĕрчĕ.
Çĕршыв та пуян çав
Аслă Çĕпĕрте.
Хаваслă колхозсем
Ирĕк çĕршывра.
Кĕтӳпех машинсем
Чупаççĕ уйра.
Ударлă ĕçлеççĕ
Колхозникĕсем,
Паттăр çитĕнеççĕ
Ывăл-хĕрĕсем.
Куймакне кавлеççĕ
Çу çине пуçса,
Çĕмĕрт çĕмĕреççĕ
Пылпалан хушса.
Пулли те тальменĕ
Унти шывсенче.
Пит тутлă пелменĕ

Лекнӗ кунсенче.
Шурри те, хури те
Алтай тиллисем
Тӗнчери чи паха
Кайӑк тирӗсем.
Шур тиллӗн йӑхӗ те
Алтайра анчах,
Вӑл ытти ҫӗршывран
Ҫухалнӑ пачах.
Ак тата пӑхар халь
Кемер шахтине:
Епле ту ватаҫҫӗ
Унта шахтерсем.
Том урлӑ вакунӗ
Тимӗр сӑнчӑрпа
Сывлӑшран ҫакӑнса
Кӑмрӑк сӗтӗрет.
Аялта пӑрахут
Кӑмрӑк вӑйӗпе
Том шывне ҫӗмӗрсе
Чашкӑрса ҫӳрет.
Ав епле хӑватлӑ
Ӗҫ патшалӑхӗ,
Мухтавлӑ кунҫуллӑ
Паттӑр халӑхӗ.
Шывӗ те, тӑвӗ те
Пӑхӑннӑ ӑна.

## V

Ҫӗнӗ хӗвеле
Хыпса ҫӑтасшӑн

Юнлă çăвар карса,
Ахăрса-çухăрса,
Куççене чарса,
Пăхаççĕ çиленсе
Тискер фашистсем.
Тĕлĕксем хăрушă,
Элек усăсăр.
Нимле элек те,
Нимле тĕлĕк те
Çăваяс çук вĕсен
Юнлă кĕсенне.
Хĕрлĕ Çар хурçи çеç
Кĕсен-çăпана
Вутпала-çулăмпа
Çунтарать ăна.
Юлашки татăклă
Çапăçу пырать.
Гитлер сехри хăпнă,
Чĕтрет, çухăрать.
Уй-хирте, шыв çинче.
Сĕм вăрмансенче
Фашистсем ахлатса
Вилеç юн хăсса.
Вĕсен юнлă пичĕ
Куçĕсем çинче
Çăхансем çуйăхса
Лараççĕ чыхса.
Хăлхи-сăмсисене,
Ӳт-пĕвĕсене
Кураксем-чакаксем
Çиеççĕ чавса.

Пĕтчĕр кĕлиленсем—
Кусçуль ĕçенсем,
Вилĕм сĕлекиллĕ
Тискер çĕленсем!
Хаяррăн çухăраççĕ
Хапрăк-савăтсем,
Хĕрлĕ тутăр çыхрĕç
Хура пĕлĕтсем.
Хĕлхемпе витĕнчĕç
Хуласем, ялсем,
Пĕлĕте çĕкленчĕç
Хĕрлĕ ялавсем.
Тискеррĕн çуйăхса
Тăшман киммисем
Çулăмпа чăрканса
Путрĕç тинĕсе.
Çĕршерĕн, пиншерĕн
Хурçă-карапсем
Тăшмана кăклаççĕ—
Пирĕн паттăрсем.
Гитлеризм юнлă
Сăннине çапла
Ĕçхалăхĕн алли
Çĕмĕрет çапса.
Çапла килет чăнлăх,
Пĕтĕм этемлĕх
Тăванла та туслă
Чаплă кун-çулĕ.

—

# ПАТТĂР ЛЕТЧИК ЮРРИ

## I

Халăхсене хĕссе
Пусмăрласа,
Юнĕсене ĕçсе
Туласа
Урсах карĕ Гитлер
Сăн-сăпачĕ,
Пирĕн çине тискер
Тапăнчĕ.
Совет хулисене
Ялĕсене
Туп-пăшалпа перет
Çĕмĕрет.
Апат-çимĕçсене
Тăпăлтарать,
Çурт-йĕрĕсене
Çунтарать.
Тискер юнĕçене
Тӳсеймерĕм,
Тавăрам-ха хăйне
Эп, терĕм.
Хурçă карап ăшне
Кĕрсе лартăм,

Хĕвеланăç енне
Ыткăнтăм.
Ушкăн-ушкăн чаплă
Вĕçевçĕсем
Тăвăл пек юхатпăр
Паттăрсем.
Фашизмăн юнлă
Йăви çине
Харăс пăрахатпăр
Бомбăсем.
Урамсенче снаряд
Пăрр... саланать,
Фашизм никĕсĕ
Аманать.
Аçа-çиçĕм çиçет,
Хĕлхем вĕçет
Тискер гитлеризм
Çийĕнче.
Виççĕмĕш импери
Лачакинче
Çăрăлать фашизм
Юн çинче.
Ĕмĕтсĕр те сĕмсĕр
Çынçиенсем,—
Фашистсем киревсĕр
Çĕленсем,—
Кăтартаççĕ хĕн-хур
Халăхсене,
Этемлĕхĕн мĕнпур
Нацине.
Пĕттĕр, вилтĕр сăхă

Гитлеризм!
Аркантăр ылханлă
Фашизм!
Вăл нихçан куççулсĕр
Пурнаймасть,
Халăха пăвмасăр
Тăраймасть.
Урмăшнă фашистсем
Сăнсăрланнă,
Этем сăн-сăпачсем
Çухалнă.
Пĕчĕк халăхсене
Кун памаççĕ,
Акула пек хыпса
Çăтаççĕ,
Тырри-пуллисене
Çаратаççĕ,
Выльăхсене илсе
Каяççĕ,
Халăхсене вăрçа
Хăвалаççĕ,
Кил-йышĕсем выçă
Юлаççĕ,
Тĕнче йĕрĕнмелле
Ашкăнаççĕ,
Чуралăх йăлипе
Пăваççĕ,
Хĕрарăмсене
Намăслантараççĕ...
Пĕт ирсĕр фашизм,
Этем мурĕ!

Тĕп пултăр чуралăх
Сăнчăрĕ!
Йытă пуçĕ Гитлер—
Урнă канцлер
Юн тинĕсрех пăчлан,
Сăвăслан!
Тараççĕ фашистсем,
Арканаççĕ,—
Гитлерăн шайкисем
Ванаççĕ.
Çĕрте те, шывра та,
Сывлăшра та
Хĕрӳллĕн çĕнтерет
Хĕрлĕ Çар.
Вутлă çăмăр çăвать,
Аça çапать,
Вăрçă вучĕ шăрт-шарт
Шартлатать.
Хăрушă аслати
Кĕмсĕртетет:
Фашизм тĕппипех
Кисренет.
Çĕмĕр, çĕмĕр, çĕнтер
Фашистсене,
Аркат çапса паттăр
Хĕрлĕ Çар,
Ирĕклĕхĕн чаплă
Çуттисене,
Хĕвел пек мухтавлă
Сарса яр!

II

Фашист тискер кайăк,
Этем мурĕ,
Фашизм чуралăх
Сăнчăрĕ,
Гитлер—вăр-хурах
Утаманĕ,
Гитлеризм—халăх
Тăшманĕ.
Тĕнче хурахĕсем—
Ĕмĕтсĕрсем—
Фашистла çĕлен-
Калтасем
Тискеррĕн хĕсеççĕ
Сĕмсĕрленсе
Польшăна пĕтерме
Пикенсе.
Урнă пек тулаççĕ,
Пусмăрлаççĕ
Чехословакине,
Сербине.
Выçă кашкăр пекех
Асăрхаççĕ,
Халăхсене текех
Пăваççĕ.
Норвегипе Дани,
Голланди те
Фашист танатине
Çакланчĕç.
Ĕçхалăхĕн чăнлăх

Хӗвелне те
Гитлер бандисемех
Тапӑнчӗҫ.
Темсем те суяҫҫӗ,
Каппаяҫҫӗ
Харам пыр Гитлерпа
Фашистсем.
„Культур тӑвакансем"
Теҫҫӗ вӗсем
Хӑйсене хӑйсем,
Бандитсем!
Культурӑллӑ тӗнче
Ҫаплаим-ха
Пӑвать
Халӑха?!
Мӗльюн-мӗльюнӗпе
Ватта-вӗтте
Хӑварать тӑлӑха,
Хурлӑха?

* * *

Гитлера ҫӗр кирлӗ,
Мул, пуясшӑн.
Пӗтӗм тӗнче хуҫи
Пуласшӑн.
Ҫук, пулас ҫук апла.
Акӑ епле
Юрлать сӑвӑ йӗрки
Ун пирки:
Тӑрӑшшӗ —ик метр,

Урлăш—пĕрре
Территори кирлĕ
Гитлера".
Гитлер ăна пĕлмест,
Асне илмест.
Этемлĕх çук унăн,
Çăткăнăн.
Халăх çилли тулчĕ,
Çулăмланчĕ,
Гитлер ятне тĕнче
Ылханчĕ.
Аслă вырăс халăх
Тăвăлланчĕ.
Фашизма вилĕм
Çывхарчĕ.
Аçа-çиçĕм çапса,
Çĕр кисретсе
Гитлеризма пăр яр,
Хĕрлĕ Çар!
Телейлĕ кун-çулсен
Шевлисене
Шурăмпуç çутти пек
Сарса яр!

III

Октябрь улăпĕсем—
Большевиксем
Юнлă тронсене
Аркатрĕç,
Халăхсен мухтавлă
Туслăхĕнче

Хĕрлĕ Çар хурçипе
Çĕнтерчĕç.
Сталинла хăватлă
Конституцин
Хаваслă хĕвелĕ
Айĕнче,
Октябрь çулăмĕ
Ялкăшнинче
Пирĕн халăх курчĕ
Çут тĕнче.
Тăван искусство
Чечекленчĕ,
Илемлĕ çырулăх
Çĕкленчĕ.
Стахановла хĕрӳ
Ĕçлекенсем
Илеççĕ çĕнтерӳ
Парнисем.
Киввине çĕннипе
Танлаштарса,
Чаплă ӳсĕмсемпе
Ялкăшса,
Паттăр летчик юрри
Хавхаланса,
Илемлĕн янăрать
Савăнса:
„Сталинла чăнлăхăн—
Мĕнпур йăхăн
Пĕр тан пирĕн наци
Тивĕçĕ.
Пĕтĕм ĕçхалăхне

Çывăх курать,
Çутта тухма аслă
Çул парать.
Акă халь мĕншĕн
Пĕтĕм тĕнчен
Ултталмĕш пайĕнче
Халăхсен туслăхĕ
Çирĕпленчĕ,
Аслă Сталин ячĕ
Çĕнтерчĕ.
Чăваш çĕршывĕ те
Капăрланчĕ,
Уяв хĕрĕсем пек
Тумланчĕ.
Индустри хулисем
Çитĕнчĕçĕ,
Телейлĕ кун-çулсем
Килчĕçĕ.
Ударлă ĕçлекен
Колхозниксен
Çулленех хунаççĕ
Тыррисем.
Чечек ăшне юлчĕç
Çул-йĕрĕсем,
Çăлтăр пек юхаççĕ
Машинсем.
Ĕçхалăх сывлăхне
Сыхлакансем—
Ишланчĕç тухтăрсем,
Фельдшерсем.
Поэт-писательсем

Çитĕнеççĕ,
Октябрь сĕткенне
Илеççĕ.
Телейлĕ самана
Шăпчăкĕсем
Шăратаççĕ мухтав
Юррисем.
Часах тава тивĕç
Музăкçăсем
Шăрантарĕç чăваш
Оперĕсем.
Яланах хăюллă,
Пултаруллă
Аслă вырăс халăх
Çемьипе
Тăванлă та туслăн,
Алла-аллăн
Ĕçленипе эпĕр
Ӳсетпĕр."
Çĕнĕ сĕткен ĕçет
Пирĕн уй-хир.
Культурăллă ӳсет
Ывăл-хĕр.
Ăмăртса ĕçлеççĕ
Агрономсем—
Вăйлă тырă-пулă
Ăстисем.
Мухтавлă та ĕçчен
Художниксем
Ӳкереççĕ чаплă
Картинсем.

Чăваш инженерсем,
Артистсем пур.
Çĕнтерӳ юррисем
Юрлатпăр:
„Утçăмах та лайăх,
Пуçне ухать.
Чĕн йĕвенĕ тăрăх
Тар юхать.
Фашист пуçне уснă,
Салху пăхать—
Çан-çурăмĕ тăрăх
Юн юхать.
Акăшсем вĕçеççĕ
Ай, малалла,
Урисене тăснă
Каялла.
Хĕрлĕ Çар ыткăнать
Ай, малалла,
Фашистсем тараççĕ
Каялла.
Шурăмпуçпе шăпчăк
Юрланă чух
Колхоз тырри-пулли
Хумханать.
Хĕрлĕ Çар хĕрӳллĕ
Çĕнтернĕ чух
Ĕççынни тĕнчипех
Савăнать.
Аслă Атăл юхать
Ай, çутăлса,
Шур прахут килет

Чашкӑрса.
Аслӑ Мускав патӗнчен
Сехри хӑпса
Гитлер тарчӗ куҫне
Чалӑртса.
Мускавпа Шупашкар
Ай, хушшинче
Йӗпкӗн хура утҫӑм
Кӗҫенет.
Хӗрлӗ ялав хӗрӳ
Вӗлкӗшнинче
Фашизм арканни
Сисӗнет.
Пурҫӑн тутӑр ҫемҫе
Тыткалама.
Тӑван ҫӗршыв лайӑх
Пурӑнма.
Ҫӗнтерӳсем чаплӑ
Хавхаланма,
Юрӑсем хавăслӑ
Юрлама".

---

1
О.Т.К.

Н. И. ШЕЛЕБИ

ВОЖДЮ

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ